К 84.09 (=чув)
Д 13
Ч-46208

ЯЛАВ
БИБЛИОТЕКИ

Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# ХАЛЬХИ ЮРӐСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-046208

«ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИ
8 (92) КĂЛАРĂМ

Ваҫлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# ХАЛЬХИ ЮРĂСЕМ

(Чăваш композиторĕсем кĕвĕленĕ)

КПСС Чăваш обкомĕн издательстви
Шупашкар — 1990



**Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ** поэта пирĕн республикăра çеç мар, çĕршывăн ытти кĕтессисенче те аван пĕлеççĕ. Унăн сăввисемпе çырнă чылай юрă халăх юррисем пулса тăчĕ.

Чăнах та, поэт хăйĕн ĕмĕрĕнче чăваш композиторĕсемпе В. Воробьевпа А. Токарев, Ф. Лукинпа Г. Лебедев, Г. Хирбюпе А. Орлов-Шуçăм, А. Асламаспа А. Токарев, Ф. Васильевпа Т. Фандеев, А. Петровпа А. Васильев, В. Ходяшевпа А. Михайлов, Ю. Кудаковпа Ю. Жуков, А. Бурундуковпа В. Петров тата ытти композиторсемпе пĕрле 350 юрă, «Ĕç хыççăн», «Кай-кай Ивана», «Акатуй» сюитăсем, «Республика çулĕ» оратори, «Шуршăл тăхлачи» музыка комедийĕ валли юрăсем, «Чмень» опера валли либретто çырчĕ.

В. Давыдов-Анатри — Чăваш халăх поэчĕ, культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Литературăра хастар ĕçленĕшĕн вăл «Халăхсен туслăхĕ» орденпа наградăланнă.

Ку кĕнекене В. Давыдов-Анатрин чăваш композиторĕсем юрра хывнă сăввисене кĕртрĕмĕр.

© «Ялав» библиотеки

# ЫТАРАЙМИ ЧӐВАШ ҪĔРШЫВĔ

Кĕвви Т. ФАНДЕЕВӐН

1. Чӑваш ҫӗршывӗ, эс ҫуллен
Ҫунат хушан, вӑй-хал илен.
Эс мирлӗ халӑх ҫемйинче,
Асамлӑ Атӑл хӗрринче
Ҫурхи сад евӗр ешерен,
Ҫӗн самана ҫуртне ҫӗклен.

2. Чӑваш ҫӗршывӗ, тӑрӑшан,
Ятна, чысна ҫӳлте тытан
Ялсем ӳсеҫҫӗ, хуласем...
Илемлӗ пирӗн юрӑсем!
Сана мӗнле-ха мухтас мар, —
Ик куҫ тулли шур Шупашкар.

3. Чӑваш ҫӗршывӗ, сас паран
Инҫе, ҫут ҫӑлтӑрсем таран, —
Совет Союзӗ вӑйлӑран,
Пур халӑхпа тус-тӑванран
Ӗҫлен, телейлӗ пурӑнан,
Малтан мала хастар утан!

И-46208

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# ÇĔР-ПЛАНЕТА ЧĔНЕТ...

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Çĕр-планета чĕнет пурнăçа юратма,
Тĕнчипе пур йышпа çирĕп миршĕн тăма.
Çĕр-планета чĕнет...

2. Çĕр-планета чĕнет пĕр-пĕрне ал пама,
Халăхсем хушшинчи туслăха упрама.
Çĕр-планета чĕнет...

3. Çĕр-планета чĕнет хĕрӳ ĕçшĕн çунма,
Çĕнтерӳшĕн куллен çĕнĕ ӳсĕм тума.
Çĕр-планета чĕнет...

4. Çĕр-планета чĕнет вăрçа хирĕç тухма,
Çут тĕнче илемне — пурнăçа сыхлама.
Çĕр-планета чĕнет...

# МУХТАТПĂР ВЫРĂС ХАЛĂХНЕ

Кěвви Г. МАКСИМОВĂН

1. Мухтатпăр вырăс халăхне, —
Вăл пирěн çывăх тус-тăван.
Çěршыв-аннемěр хăватне
Пěрле çěклетпěр унпалан.

2. Мухтатпăр вырăс халăхне:
Эпир телейлě вăл пуртан.
Пире вăл панă ăс-халне
Сума-суса мěн авалтан.

3. Мухтатпăр вырăс халăхне, —
Вăл шанчăк пирěн пурнăçра.
Унпа Октябрь ялавне
Тытатпăр çирěп алăра.

4. Мухтатпăр вырăс халăхне
Асаттесен ыр йăлипе.
Тавах сана, Раççей-анне,
Пěрле эс ěмěр пирěнпе

# ПАЛАК

Кĕвви Г. МОКЛАКОВĂН

1. Тăрать çӳллĕ, шурă палăк
Тăван ялăм варринче.
Пуç таятăп: салтак-паттăр
Выртать унăн айĕнче.

2. Эй, юлташăм, канлĕ çывăр,
Парăмра эп сан умра.
Çулсем пулчĕç питĕ йывăр,
Çĕршыв сунчĕ çулăмра.

3. Сыввисемшĕн эс çĕклентĕн,
Вилĕм кӳтĕн тăшмана,
Ĕççыннишĕн хĕрхенмерĕн
Хăвăн çамрăк пурнăçна.

4. Тăрать çӳллĕ, шурă палăк
Аслă ялăн варринче.
Пуç таятăп: салтак-паттăр
Выртать унăн айĕнче.

# ЫТАРАЙМИ ТĂВАН ЧĔЛХЕМĔР

Кĕвви Ю. КУДАКОВĂН

1. Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Эс çав тери хитре-чипер!
Санпа пĕрле кăвар чĕремĕр, —
Пĕрлех çĕп ĕмĕре кĕрер.

2. Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Сана манмастпăр ĕмĕрне.
Çухатас çук, атте-аннемĕр, —
Эсир пилленĕ парнене.

3. Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Хисеплĕ эс те çĕр çинче.
Чунăмăрти сӳнми хĕлхемĕр,
Эс ялкăш халăх чĕринче.

4. Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Упра асаттесен пилне.
Нихçан асран каймн парнемĕр,
Çĕкле эс пурнăç илемне!

# ЧĂВАШ ТĔРРИ

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Мĕнле пуян чăваш тĕрри, —
Унта пин-пин çулсен йĕрри,
Унта хăват илет çĕнни,
Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.

2. Мĕнле хитре чăваш тĕрри, —
Ун курăнмасть вĕçĕ-хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ çутă çăлтăрсем.

3. Мĕнле чипер чăваш тĕрри,
Унта маттур хĕрсен юрри,
Унта шур хурăнсен ĕшни,
Унта шур акăшсем вĕçни.

4. Мĕн авалтан чăваш тĕрри
Хĕвеллĕ, хӳхĕм çав тери.
Унта тăван ялйыш сасси,
Хирти ака-суха касси.

5. Мĕнле хитре чăваш тĕрри, —
Унта çынсен хĕрӳ чĕри,
Яш-кĕрĕмсен паха парни,
Çĕршыв-анне çунат сарни...

# ЧĔРЕРИ ТУЙĂМ

Кĕвви А. ТОГАЕВĂН

1. Йĕс шăнкăрав сассăмпа,
Хам чĕрери юррăмпа
Ман пуласчĕ ĕмĕрех
Пĕрле Тăван çĕршывпа.

2. Хамăн ăшă чунăмпа,
Пĕтĕм кăмăл туйăмпа
Ман пуласчĕ ĕмĕрех
Пĕрле Тăван çĕршывпа.

3. Мĕнпур вăйăм-халăмпа,
Мирлĕ, ĕçлĕ халăхпа
Ман пуласчĕ ĕмĕрех
Пĕрле Тăван çĕршывпа.

## ТАВАН ХУЛА

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Атăл тăрăх хăпаратпăр,
Ак умра, инçех те мар,
Курăнса каять хуламăр —
Пирĕн капăр Шупашкар.

2. Эс ялан кĕтсе илетĕн
Пире çывăх тăванла,
Сăнупа илем кӳретĕн
Ирĕк, аслă Атăла.

3. Савăнатпăр, тĕлĕнетпĕр
Эсĕ хăвăрт ӳснинчен,
Сàвă-юрă кĕвĕлетпĕр
Хамăр хуламăр çинчен.

4. Ĕмĕр пул эс пĕртăванлă
Аслă, чаплă Мускавпа,
Пирĕн ĕçлĕ, çĕн вăй-халлă
Хăвăрт ӳсекен хула.

# ТĂВАНСЕМĔР, ТАВ СИРЕ

Халăх юрри тăрăх кĕввине
А. Токарев йĕркеленĕ

1. Тăвансемĕр, пĕрле чухне,
Ай, юрлар-и юррине.
Эсир пире хăна турăр, —
Ҫаяс пулать, сыв пулăр.

Хушса юрламалли:

Ай, ытарма та ҫук сире,
Чунтан саватăр пире,
Ай, усратăр ялан чĕрере.

2. Тăвансемĕр, тавах сире,
Туслăх пытăр ĕмĕре.
Ҫĕрекĕрсем тулли пулччăр,
Ватти-вĕтти ыр куртăр.

Хушса юрламалли.

3. Тăвансемĕр, ĕҫ пуҫтарсан,
Ҫĕрхи кунсем пуҫлансан,
Пире хисеп-чыс тусамăр,
Пырса курма ан манăр.

Хушса юрламалли.

# ЧĔРЕ ЮРРИ

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Çурхи çут хĕвел пек сăнăмпа
Аслă Атăл, сана çутатасчĕ,
Чĕререн килекен юррăмпа
Пур çынсен чĕрине ăшăтасчĕ.

2. Çурхи çут хĕвел пек чунăмпа
Сапай çын, маттур çын ман
пуласчĕ,
Еçĕмпе, иксĕлми вăй-халпа
Яланах халăха пулăшасчĕ.

3. Çурхи çут хĕвел пек кăмăлпа
Ĕмĕрех туслăхра пурăнасчĕ,
Чĕререн килекен юррăмпа,
Çĕрĕм-шывăм, сана ман
мухтасчĕ.

# ПИРЕ ТĂВАН КĔТСЕ ТĂРАТЬ

Кĕвви Ю. КУДАКОВĂН

1. Пире тăван кĕтсе тăрать,
Пÿрт алăкне уçса хурать,
Ыр ут юртать, пуçне ухать,
Çулне кĕске тума васкать.

2. Пире тăван кĕтсе тăрать,
Сакки çинче сăра ларать.
Сĕтел çинче кукар яшки,
Улма-çырла — чашки-чашки.

3. Пире тăван кĕтсе тăрать,
Çитеймесрен чунтан хăрать.
Ыр ут юртать, пуçне ухать,
Хăта килне çитме васкать.

# АҪТАН ПЕЛНЕ ЭС ПУЛМА

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Тăван манмасть тăвана, —
Юри килтĕм хăнана.
Кĕтсех тăнă эс мана, —
Тавах ҫăкăр-тăварна!

2. Аҫтан пĕлнĕ эс пулма, —
Тăван, ларсам ман ҫумма.
Юри килтĕм калаҫма,
Юри килтĕм юрлама.

3. Тĕплĕн, лайăх шутласан, —
Мĕн пур хакли тăванран?
Ҫакна туйса эс тăран,
Ху та ҫырлан курăнан.

## САВАНАÇ ЮРРИ

Кěвви А. АСЛАМАСĂН.
А. ПЕТРОВ, Т. ФАНДЕЕВ,
Ф. ВАСИЛЬЕВ та юрра хывнă

1. Чĕвĕл чĕкеçсем,
Çепĕç шăпчăксем
Савăнса юрлаç янкăр ирхине.
Хастар каччăсем, ] 2 хут
Çамрăк пикесем
Васкаса утаç тулă пуссине.

2. Ылтăн уй-хирсем,
Симĕс вăрмансем
Тухайса тăраç пирĕн куç умне.
Çутă кӳлĕсем, ] 2 хут
Хумлă тинĕссем
Чыс-илем кӳреç Совет çĕршывне.

3. Ырă шухăшсем,
Çĕнĕ ĕмĕтсем
Ялкăшса çунаç пирĕн чĕрере.
Хаклă тантăшсем, ] 2 хут
Çывăх тусăмсем
Мухтаса юрлар чаплă ĕмĕре!

# МĔНЛЕ ПУРĂНАН, АЯКРИ ТĂВАН?

Халăх юрри майлă
А. АНДРЕЕВ кĕвĕленĕ

1. Çуркунне çитет,
Кайăк хур килет.
Куç тулли илем
Тыткăна илет. 2 хут

Хушса юрламалли:

Ешерет вăрман,
Ешерет çаран.
Мĕнле пурăнан,
Аякри тăван?

2. Тăван ял ӳсет,
Çуллен çĕнелет,
Савăнмалăх пур, —
Çыннисем маттур! 2 хут

Хушса юрламалли.

3. Тăвана тăван
Тарават ялан:
Кил эс, пул хăна,
Кĕтетпĕр сана.

Хушса юрламалли.

4. Пĕр-пĕрне чунтан
Хисеплен пулсан,
Ним те çук унтан
Хакли, тус-тăван. 2 хут

Хушса юрламалли.

## ЯЛЙЫШПАЛА ПĔРЛЕ ЧУХНЕ

Кĕвви Т. ФАНДЕЕВĂН

1. Аван-çке хăнара пулма,
Пĕрне-пĕри хисеп тума.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ялйышпала пĕрле чухне!

2. Анса пулсан тырри-пулли, —
Ĕçме-çиме сĕтел тулли.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ялйышпала пĕрле чухне!

3. Тухас килмест çак кил-çуртран
Килĕштерсе пуранн ăран.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ялйышпала пĕрле чухне!

4. Шуçăмпалах ĕçе тухар,
Çĕр-аннене сума сăвар.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ялйышпала пĕрле чухне!

И-46208
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# КОЛХОЗ ЛАШИ, ХУРА ТУР

Кӗвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

1. Колхоз лаши, хура тур,
Юртать, чупать пит маттур.
Ăçтан ăна хурлама, —
Илем кӳрет урама.

2. Колхоз лаши, хура тур,
Тус-тăванăм, ларса кур.
Чупар пӗрле катаччи,
Тыт тилхепе, ял каччи.

3. Колхоз лаши, хура тур,
Çамки çинче çăлтăр пур,
Пуçне ухса, ташласа
Кӗтет çула тухасса.

4. Колхоз лаши, хура тур,
Кая ан юл, хур ан кур.
Паян пирӗн саппала
Каллех çула тухмалла.

# АСЛИ ÇУК ÇĂКĂРТАН

Кĕвви А. ОРЛОВ-ШУÇĂМĂН

1. Халăх ĕмĕр çапла шухăшлать:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Ял ĕçченĕ хирте тар тăкать,
Уншăн чунĕ çунать ун ялан.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, —
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

2. Çăкăр вăл — çĕр-аннемĕр парни,
Вăл пулсан, эпир вăйлă, пуян.
Ĕçлĕ халăх ăна хаклани
Ĕмĕртен вăл пырать, авалтан.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, —
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

3. Ачаран пултăр пирĕн асра:
Тĕпретме юрамасть çăкăра!
Пирĕн пурнăç хăвачĕ унта,
Унăн ячĕ ялан чи малта.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, —
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

# МУХТАВ СИРЕ, ÇĔР ĂСТИСЕМ

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Ытарайми тусăмăрсем,
Колхозлă ял ĕçченĕсем,
Вăйлă тырпул тăвакансем, —
Мухтав сире, çĕр ăстисем.
2 хут

2. Ытарайми тусăмăрсем,
Çунатлă ĕмĕр çыннисем,
Сĕт-çу туса илекенсем, —
Мухтав сире, çĕр ăстисем.
2 хут

3. Ытарайми тусăмăрсем,
Хастар, хĕрӳллĕ чĕресем,
Пахчаçăсем, хăмлаçăсем, —
Мухтав сире, çĕр ăстисем.
2 хут

4. Ытарайми тусăмăрсем,
Ĕçе чунтан савакансем,
Çĕршыв чапне çĕклекенсем, —
Мухтав сире, çĕр ăстисем!
2 хут

# ТАВАН ЯЛАМ

Кĕвви Н. КАРЛИНĂН

1. Садсенче чечексем çурăлаççĕ,
Пăла шывĕ юхать çуталса.
Тàван ял халăхне вăратаççĕ
Шăпчăксем юрăсем юрласа.

2. Уй-хирте, фермăра ялăм-йышăм
Тăрăшать, пултаруллăн ĕçлет.
Çĕрĕм-шывăм, пиртен парне
йышăн, —
Пÿлмене çĕнĕ тырă кĕрет.

3. Эх, хитре тăван ял сăн-сăпачĕ
Эпир уншăн çунса тăнăран.
Юрăра янăрать ырă ячĕ
Тăван халăх çĕрпе туслăран.

# САД ЯНАРАТЬ САРКАЙАК САССИПЕ

Кĕвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

1. Эпир ирех тăратпăр ĕç умне...
Хĕвел хĕртет, сапать, ай,
шевлине.
Хирте каш-кашласа тырпул ӳсет.
Çунатланса хăмла, ай, ешерет.
Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттурripe

2. Умра эпир ӳстернĕ çăкасем,
Шăнкăртатса юхан, ай, çырмасем,
Шур акăшсем иленнĕ кӳлĕсем.
Йăлтăртатса вылян, ай,
çăлкуçсем.
Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

3. Ăмăртмалла вĕçеççĕ чĕкеçсем,
Мĕнле хитре вĕсен, ай, юррисем
Мĕнле аван, хавас чун-чĕрене.
Тавах çĕршыв-аннемĕр илемне!
Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

# ЭПИР — МАТТУР ХӐМЛАҪӐСЕМ

Кӗвви Г. ЛЕБЕДЕВӐН

1. Эпир, маттур хӑмлаҫӑсем,
Мӗн авалтан ӗҫчен ҫынсем.
Ҫӗклетпӗр пурнӑҫ илемне
Хӗвеллӗ ҫутӑ тӳпене.

Хушса юрламалли:

Ик куҫ тулли хӑмла пахчи,
Чун савӑнать унта тухсан.
Юрлать ватти, ачи-пӑчи,
Ӗҫсем кал-кал ӑнса пырсан.

2. Эпир, маттур хӑмлаҫӑсем,
Ӑмӑртура чи малтисем,
Ялйышпала, пурте пӗрле,
Хӗрсе ӗҫлетпӗр ҫӗнӗлле.

Хушса юрламалли.

3. Эпир, маттур хӑмлаҫӑсем,
Ӗҫпе ыр ят илнӗскерсем,
Асран ямастпӑр ӗмӗрне
Сана, Тӑван ҫӗршыв-анне!

Хушса юрламалли.

# ПАРНЕ

Кĕвви А. ТОКАРЕВĂН

1. Утрăм уйăх хăпарсан
Улма пахчипе.
Савăнайрăм кăмăлтан
Ун илемĕпе.

2. Илтрĕм йывăç пахчинче
Шăпчăк сассине.
Туйрăм çамрăк чĕремре
Юррăм пуррине.

3. Эп пуçларăм юррăма
Чи илемлине.
Пултăр çĕрĕм-шывăма
Вăл манран парне.

## КĔРЕКЕ ЮРРИ

Кĕвви Н. ЭРИВАНОВĂН

1. Кĕр кунĕ çитсен, килетпĕр юри,
Пуçлатпăр пĕрле тăванлăх юрри.

Хушса юрламалли:

Ыр пурнăç, телей
Сунатпăр сире.
Каятпăр киле,
Асатăр пире.

2. Кил-çуртăр таса, сĕтелĕр—тулли,
Мĕн тумĕ ялти ĕçчен çын алли.

Хушса юрламалли.

3. Тăванлăх юрри çĕклетĕр чуна,
Манас çук эпир нихçан çак куна.

Хушса юрламалли:

Ыр пурнăç, телей
Сунатпăр сире.
Каятпăр киле,
Асатăр пире.

# АТТЕ-АННЕ

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Атте-анне пире упранă
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Алла илсе хуллен лăпканă
Сап-сарă пушăт сăпкаран.

2. Атте-анне пире юратнă,
Сиктернĕ юрă юрласа.
Юмах-халап ярса йăпатнă,
Йăпатнă шăпăр каласа.

3. Атте-анне пире пилленĕ
Вĕçмешкĕн кăйкăр çунатне,
Чун-чĕререн шанса çĕкленĕ,
Ялан вĕрентнĕ çĕр ĕçне.

4. Атте-анне пире ăс панă
Ята-чыса çӳлте тытма.
Ăс-хал пани ĕçре юранă,
Юранă ырă çын пулма.

# КАÇАР, АННЕ

Кĕвви В. ХОДЯШЕВĂН

1. Каçар, анне, час-час çырмарăм,
Ан кӳренсем, ан ӳпкеле.
Сан умăнта сахал-и парăм,
Хăçан татса пĕтермелле!

2. Каçар, анне, чунри çунатăм,
Сисетĕп эп, тек ан пытар, —
Çыру çук чух хыпса çунатăн,
Пăшăрханса кĕтен хыпар.

3. Аннеçĕм, эс мана ăсатрăн
Инçе çула, çĕн хулана.
Ху ачуна асран ямарăн,
Эп этем мар мансан сана!

# СЛАКПУÇ ÇЫННИСЕМ

Кĕвви А. ОРЛОВ-ШУÇĂМĂН

1. Чунтан савнă Слакпуç хĕрĕсем,
Хĕвел сăнлă хальхи Нарсписем,
Эсир мар-и Силпи çутисем,
Ăмăртуллă ĕçре малтисем!

2. Çĕнĕ пурнăç вĕрет Пушкăртра,
Мĕн чул ырлăх, илем — туслăхра!
Тăвансемĕр, Слакпуç çыннисем,
Пĕрле пирĕн хĕрӳ чĕресем.

3. Илĕртӳллĕ Слакпуç каччисем,
Хĕрӳ чунлă хальхи Сетнерсем.
Эсир мар-и çĕрпе туслисем,
Пултаруллă тырпул ăстисем.

4. Пире çывăх Слакпуç çыннисем,
Кĕçтенттин пек маттур чăвашсем.
Ыр сунатпăр сире чĕререн, –
Ĕçĕр пытăр ăнса çулсерен!

# ÇАМРĂК ЁМĔР ПĔРРЕ ÇЕÇ КИЛЕТ

Кĕвви Ю. ЖУКОВĂН.
Г. МАКСИМОВ та юрра хывнă

1. Мĕн çитет пурнăçа савнине,
Тус-йышра килĕшӳ пуррине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, —
Ай, мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

2. Мĕн çитет çын ĕçчен пулнине,
Ыр туни халăхра юлнине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, —
Ай, мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

3. Мĕн çитет выляни-кулнине,
Юратушăн çунса тăнине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, —
Ай, мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

4. Мĕн çитет малалла пăхнине,
Пирте сывлăх, телей пуррине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, —
Ай, мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

## ПАТАРЪЕЛ КАЧЧИ-ХЕРЕСЕМ

Кĕвви А. БУРУНДУКОВĂН.
А. АСЛАМАС та юрра хывнă

1. Мĕскер ĕнтĕ калар-ши сире,
Тĕлĕнетпĕр тухсан уй-хире.
Эсир пурте ĕçлетĕр хĕрсе,
Юхмаъен Патăръел хĕрĕсем,
Пăлаçи Патăръел каччисем.

2. Ķам-ха савмĕ, юратмĕ сире:
Сăн-пуçран питĕ хӳхĕм, хитре.
Эсир мар-и тырпул ăстисем,
Юхмаъен Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаçи Патăръел каччисем.

3. Мухтанатпăр эпир сирĕнпе,
Çĕрпе, туслă, ĕçчен çынсемпе.
Эсир мар-и кăвар чĕресем,
Юхмаъен Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаçи Патăрьел каччисем.

# АРАПУÇ ХĔРĔСЕМ

Кĕвви А. ОРЛОВ-ШУÇĂМĂН

1. Ялкăшан хĕвел пек пичĕсем,
Мăшăр çут çăлтăр пек куçĕсем...
Вĕсем мар-и çурхи чечексем, —
Чипер çав Арапуç хĕрĕсем.

2. Çырла тейĕн — çӳхе тутисем,
Акăш тейĕн — кал-кал уттисем...
Вĕсем мар-и эпир савнисем, —
Сăпай çав Арапуç хĕрĕсем.

3. Уй-хирте, фермăра — малтисем,
Симĕс ылтăн-хăмла ăстисем...
Вĕсем мар-и хĕрӳ чĕресем, —
Ĕçчен çав Арапуç хĕрĕсем.

4. Шăратаççĕ хитре юрăсем,
Илĕртеççĕ чуна сассисем...
Вĕсем мар-и садри шăпчăксем, —
Маттур çав Арапуç хĕрĕсем.

## ҪАШМАШ ҪАЧЧИ

Кĕвви А. ТОКАРЕВĂН

1. Ҫолхоз пахчи, улма пахчи,
Унта ĕҫлет Ҫашмаш ҫаччи.
Унта ĕҫлет Ҫашмаш ҫаччи —
Маттур ҫăна чăваш ачи.

2. Хăй мухтанмасть пули-пулми,
Пахчи тулли пулать улми,
Пахчи тулли пулать улми,
Турат йăтса, ай, лараймп.

3. Ун ĕҫĕпе колхоз пуять,
Ăна мĕнпур ялйыш мухтать,
Ăна мĕнпур ялйыш мухтать,
Телейлĕ ҫул, вăй-хал сунать.

4. Ҫолхоз пахчи, улма пахчи,
Унта ĕҫлет Ҫашмаш ҫаччи,
Унта ĕҫлет Ҫашмаш ҫаччи,
Маттур ҫăна чăваш ачи.

## САВНИ САЛАМĔ

Кĕвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

1. Савни, санран салам илсессĕн,
Кĕтни çитет чун-чĕрене:
Умра тăран, ятуллă эсĕ,
Пăхатăн ашшăн ман çине.

2. Савни, санран салам илсессĕн,
Тухать шур хурăн куç умне.
Эпир, çурхи кунсем çитсессĕн,
Сахал-и ларнă ун çумне.

3. Савни, санран салам илсессĕн,
Куратăп уйăх çутине,
Шур акăшсем вĕçсе килсессĕн,
Пĕрле ирттернĕ каçсене.

# ТАВРАНАТАП САЛТАКРАН

Кёвви Ф. ЛУКИНАН

1. Хёвел вылять тӳпере, —
Мён чул савнăç чёрере:
Эп тавранап инçетрен
Киле — Совет Çарёнчен.
Атте килё, тăван кил,
Эс ывăлна кётсе ил.

2. Тăван çёршыв-аннене,
Унăн ёçлё халăхне
Юратнăран, савнăран
Малта пултăм эп ялан.
Атте килё, тăван кил,
Эс ывăлна кётсе ил.

3. Ялта каллех сирёнпе,
Хамăн çывăх тусcемпе,
Тухап колхоз уй-хирне
Чун туртнăран çёр ёçне.
Атте килё, тăван кил,
Эс ывăлна кётсе ил.

## КАЛА, ТУСĂМ, ЧĂННИНЕ

Кĕвви Г. ХИРБЮН

— Ах, кала, тусăм, чăннине:
Ма килмерĕн каçхине?
Эп сана кӳлĕ хĕрринче
Кĕтрĕм уйăх тухиччен.

— Савнă çыннăм, ан кӳрен:
Ман туйăма эс сисмен.
Хĕрсен йăли вăл çапла —
Пăртак йăлăнтармалла.

Хĕрсен йăли вăл çапла —
Пăртак йăлăнтармалла.

— Ах, кала, тусăм, чăннине:
Ма тухмарăн каçхине?
Эп сана хурăн айĕнче
Кĕтрĕм вăйă пĕтиччен.

— Савнă çыннăм, ан кӳрен:
Унта-кунта эс çӳрен,
Ют хĕрсене, тĕл килсен,
Çавăрасшăн куç хĕсен.

Ют хĕрсене, тĕл килсен,
Çавăрасшăн куç хĕсен.

# ХУТКУПАСА ТЫТСАССАН...

Кĕвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

1. Хĕвел анса ларсассăн,
Хăш сукмакпа утам-ши,
Чун савнине курсассăн,
Мĕнле сăмах пуçлам-ши?

2. Çаран çине тухсассăн,
Хăш чечеке татам-ши,
Савни çумне ларсассăн,
Мĕнле тăрса каям-ши?

3. Пăла хĕрне ансассăн,
Хăш еннелле пăхам-ши,
Чуна вут-хĕм хыпсассăн,
Мĕскер сапса чарам-ши?

4. Хуткупăса тытсассăн,
Хăш урама тухам-ши,
Савни савать пулсассăн,
Мĕн каласа юрлам-ши?

# ПУРҪАН ТУТӐР

Кĕвви Ф. ЛУКИНӐН

1. Пурҫӑн тутӑр савни пуҫĕнче.
Ыр сунса эпĕ панӑ парне.
Курӑнать, ав, урам вĕҫĕнче,
Чĕнет пулĕ мана хӑй патне.

2. Пурҫӑн тутӑр, сана шыраса
Такӑрлатрӑм Тури урама.
Кĕтсе ил: шурӑ лантӑш йӑтса,
Вĕҫсе ҫитĕп чуна йӑпатма.

3. Пурҫӑн тутӑр савни пуҫĕнче, —
Ҫĕр пин тĕрĕ, пĕрре кивелмен.
Пур телей, пур илем ҫĕр ҫинче
Чĕрере юрату сӳнмесен.

## МАНА ХЫТĂ АН КАЛА

Кĕвви В. ХОДЯШЕВĂН

1. Мана хытă ан кала,
Вăл аван мар япала,
Ялан начар шутлани,
Пĕр айăпсăр ятлани
Çапса хуçать кăмăла, —
Мана хытă ан кала.

2. Мана хытă ан кала, —
Пирте çынлăх пулмалла.
Пĕрне-пĕри юратни,
Чунтан шанса пурăнни
Çунат парать вăй-хала, —
Мана хытă ан кала.

3. Мана хытă ан кала...
Чун савниçĕм, санпала
Пĕрле çула тухмалла,
Пĕрле пурнăç тумалла,
Пĕрле йăлтах чăтмалла, —
Мана хытă ан кала.

## ЧУНĂМ ÇУННĂРАН

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Пĕрех эс маншăн хĕвелпе,
Пĕрех эс маншăн чĕремпе, —
Сăну ытла илемлĕрен,
Чуну ялан хĕрӳллĕрен. | 2 хут

2. Пĕрех эс маншăн уйăхпа,
Пĕрех эс маншăн çăлтăрпа, —
Çут ĕмĕтпе пурăннăран
Чи çывăх çыннăм пулнăран. | 2 хут

3. Пĕрех эс маншăн тăванпа,
Пĕрех эс маншăн пурнăçпа, —
Пĕрле хăюллăн утнăран,
Пĕр саншăн чунăм çуннăран. | 2 хут

## ÇУРЛА УЙĂХ

Романс

Кĕвви А. ТОКАРЕВĂН

1. Çÿлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

2. Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт маччинче.
Лăпкă кÿлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

3. Çÿлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

## АСАТСА ЯР МАНА

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Савнă тусăм, санран уйрăлатăп,
Вăхăт çитрĕ — тухса каймалла.
Юлашки хут ларсам эс, çунатăм,
Калаçса йăпатар кăмăла.

2. Пĕр-пĕрне юратса пурăнсассăн,
Питĕ йывăр иккен уйрăлма.
Хура пĕлĕт килет кассăн-кассăн,
Каймалла çĕршыва сыхлама...

3. Асатса яр мана, савнă тусăм,
Чипер юл, туслăха эс упра.
Васкаса хăпарать ирхи шуçăм,
Каяс çулăм выртать умăмра.

# ЭС МАНА ЮРАТСАН

Кĕвви И. СТЕПАНОВĂН

1. Тĕл пуласчĕ ман, савниçĕм, сана,
Темшĕн-çке пĕччен пит кичем
чуна.
Сарпикем, тухсам хăвăр кил умне,
Укăлча патне, сад пахчи çумне.

2. Кăнтăртан вĕрет ăшă çил хуллен,
Хумханать çаплах пахчари
сирень.
Эх, аван, савни, иккĕн тĕл пулсан,
Юрату çинчен ăшшăн калаçсан.

3. Сар хĕвел пăхать, ешерет çаран,
Авăтать куккук, янăрать вăрман.
Эх, аван, савни, эсĕ ал парсан,
Ик кăвак куçу ман çине пăхсан.

4. Ытарма та çук сенкер çут ире,
Пахчари сирень пуç таять пире.
Эх, аван, савни, телей тупăнсан,—
Эс мана чунтан юратса савсан.

# ХАЛЬ ҪАМА ЮРРУНА ПАРНЕЛЕН

Кӗвви Ф. ЛУКИНӐН

1. Утрӑм-утрӑм утса тухаймарӑм, —
Такӑрлатрӑм куллен урама.
Савнӑ тусӑм, сана тупаймарӑм, —
Эс ҫукки ҫунтарать чунӑма.

2. Чупрӑм-чупрӑм, чупса
ҫитеймерӗм, —
Пурпӗрех эс манран инҫетре.
Юрату ҫулӑмне сӳнтермерӗм, —
Кунӗн-ҫӗрӗн сӑну чӗремре.

3. Кӗтрӗм-кӗтрӗм, кӗтсе
илеймерӗм, —
Савнӑ тусӑм, ӑҫта эс ҫӳрен?..
Тен, сана хаклама пӗлеймерӗм, —
Халь кама юрруна парнелен?

## ТЕЛЕЙЛЕ ТУСЛĂХ

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă çилĕ,
Ылтăн хĕвел тухрĕ янкăр тӳпене.
Хитре уçă сасă уй-хир тăрăх кайрĕ,
Эпĕ илтрĕм савнă сар хĕр юррине.

2. Кăмăллăн савниçĕм мана ырлăх сунчĕ,
Сума сурĕ хăйĕн ĕçри тантăшне.
Сăнĕ ун сапăйлăн ялкăшса çуталчĕ,
Юрри илем кӳчĕ колхоз уй-хирне.

3. Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă çилĕ,
Ылтăн хĕвел шурĕ пĕлĕт хушшипе.
Савнă тусăм, халĕ эпир те телейлĕ,
Кунçулăмăр çапĕ çав çут хĕвел пек.

## ТАЛЬЯНКА

Кĕвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

1. Алла тытрăм çĕн тальянка,
Тăсса ятăм пĕрмине.
Янăратăр кĕмĕл планка, | 2 хут
Савăнтартăр хĕрсене.

2. Юрламашкăн, ташламашкăн
Пире купăс вăй парать.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка, | 2 хут
Выля эсĕ аллăмра.

3. Урам тăрăх шăнкăр-шăнкăр
Сассу юхтăр шăранса.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка, | 2 хут
Юрлар халĕ савăнса.

4. Еçре эпир пурте харсăр,
Юратмастпăр мухтанма.
Эх, тальянка, кĕмĕл сасă, | 2 хут
Çĕкле манăн юррăма.

## САВНА ТУСĂМА

Кĕвви Ф. ЛУКИНĂН

1. Çутă кĕмĕл сывлăм
Ӳкнĕ таврана.
Ирхи уçă сывлăш
Ачашлать чуна.

Вăштăр кăна вăштăр
Ăшă çил вĕрет,
Тусăм евĕр вăрттăн
Чуптуса илет.

2. Сад пахчи пит капăр,
Ларнă чечеке.
Юрлать тапхăр-тапхăр
Унта сарпике.

Манăн шухăш-кăмăл
Унпала ялан.
Ĕçлеме те çăмăл
Чун савни пулсан.

3. Пурнăçăмăр селĕм —
Ешĕл çуркунне.
Юрлар, сарпикеçĕм,
Савар пĕр-пĕрне.

Çутă кĕмĕл сывлăм
Ӳкнĕ таврана.
Эп сунатăп ырлăх,
Тусăмçăм, сана.

# КЕТРЕМ-КЕТРЕМ САНА...

Кĕвви Ф. ВАСИЛЬЕВĂН

1. Эп çухатрăм йăлтах канăçа:
Кĕтрĕм-кĕтрĕм сана çĕр каçа.
Çулăм хыпре, чунта шĕл-кăвар, --
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар

2. Çамрăк ĕмĕр иртет васкаса,
Тĕл пулар пĕр-пĕрне юратса.
Кил, савни, черерен калаçар, --
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар.

3. Çĕклесемччĕ чуна, кăмăла,
Телее валеçер çурмалла.
Пултаруллăн, пĕрле çул хывар, --
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар.

## УТСА МАР, ВĔÇСЕ ÇИТЕСЧĔ

Кĕвви А. АСЛАМАСĂН

1. Çурхи кун чуна иленнĕ,
Урамра — хĕлле.
Шур чаршав хитрен чÿхеннĕн
Юр çăвать хуллен.

Утса мар, чупса çитесчĕ
Чун савни патне,
Юр пĕрчи пулса ÿкесчĕ
Ун чĕрçи çине.

2. Хĕл елкенĕ, хĕл илемĕ
Пире çупăрлать,
Шур юртан ыйтса илем-и
Çивĕч çил-çунат.

Утса мар, чупса çитесчĕ
Чун савни патне,
Юр пĕрчи пулса ÿкесчĕ
Ун алли çине.

3. Кил, савни, чунтан кĕтетĕп,
Эс ăна сисен,
Укăлча панче çÿретĕп, —
Юр çăвать хуллен.

Утса мар, чупса çитесчĕ
Чун савни патне,
Юр пĕрчи пулса ÿкесчĕ
Ун тути çине.

Ку сăвва Н. Исмуковпа çырнă

## ЮРАТУ ЮРРИ

Кěвви А. ТОКАРЕВĂН
В. ПЕТРОВ та юрра хывнă

1. Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс çěклетěн чунăма.
Савнă тусăм, эп пуçлатăп
Юратушăн юррăма.

2. Пытармастăп, савнă тусăм,
Эп телейлě — эс пуртан.
Юрла чунăм, хура куçăм,
Юратушăн манпалан.

3. Эс саватăн, эп саватăп, —
Чун-чěремěр хушшипе.
Юратушăн, чипер Атăл,
Юрла эс те пирěнпе.

4. Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс юхатăн сарăлса.
Чунăм, тусăм, эп юрлатăп
Юратушăн савăнса.

## ҪИЛ САВНИ, ЛАР ÇУМА

Кĕвви Ю. МЯСНИКОВĂН

1. Шурă хурăн айĕнче,
Қаçхи кӳлĕ хĕрринче
Эп ларатăп пĕр пĕччен, —
Тусăм, мĕншĕн кĕттерен?

Ҫил, савни, лар çума,
Ăшăтсам ман чуна.
Чăн чипер юррăма
Парнелетĕп сана.

2. Уйăх тухрĕ тӳпене,
Сарса мăшăр çунатне.
Мĕнле ырă чĕрене
Юратсассăн пĕр-пĕрне.

Ҫил, савни, лар çума,
Ăшăтсам ман чуна.
Чăн чипер юррăма
Парнелетĕп сана.

3. Юратуçăм, вăй пилле,
Ăшăт пире хĕвелле.
Тусăм, эсĕ пур чухне
Туяп пурнăç илемне.

Ҫил, савни, лар çума,
Ăшăтсам ман чуна.
Чăн чипер юррăма
Парнелетĕп сана.

## ÇЫРМА ХЕРРИНЧЕ

Кĕвви В. ХОДЯШЕВĂН

1. Çырма хĕрринче,
Йăмра айĕнче
Сар хăмăш кашлать,
Çилпе хумханать.

2. Хăмăш хушшинче,
Пĕчĕк сак çинче
Ларать Лариван
Иртенпех паян.

3. Пăхать вăлтине,
Юсать ăманне,
Савăнать чунтан,
Пулли çаклансан.

## ЧУПРАМ-ТУХРАМ ҪӐЛЕ ХЕРРИНЕ

Кӗвви А. АСЛАМАСӐН

1. Чупрӑм-тухрӑм эпӗ кӳлӗ хӗррине,
Ҫамрӑк сӑнӑм ӳкрӗ шыв ҫине.
Ҫулӑм хыпрӗ манӑн ҫамрӑк чӗрене,
Эп ҫухатрӑм, ай, ҫухатрӑм чунӑм
савнине.

2. Садра вӑштӑр-вӑштӑр ҫилӗ вӗрнипе
Шурӑ ҫӗмӗрт лӑпкӑн хумханать.
Тусӑм, кунӗн-ҫӗрӗн саншӑн ҫуннипе
Ҫанӑҫ пӗтрӗ, канӑҫ пӗтрӗ, чунӑм
хурланать.

3. Сарӑ ҫутӑ уйӑх ҫӳллӗ тӳпере,
Куртӑм: кӗҫӗ пӗлӗт хушшине.
Хамӑн савнӑ тусӑм чунӑм-чӗрере,
Вӑл туять-ши, ах, туять-ши эпӗ
ҫуннине?

# САВНИ МАНА ЧУНТАН САВСАН

Кёвви А. ТОКАРЕВĂН

1. Çӳрен утпа çула тухсан,
Савни çумра ларса пырсан,
Мана шанса куçран пăхсан, —
Телейлĕ çын çук пуль манран.

2. Вăрман хĕрне вăййа тухсан,
Савни мана чунтан савсан,
Пĕрле пулма сăмах парсан, —
Телейлĕ çын çук пуль манран.

3. Вăхăт çитсен, кĕр пуçлансан,
Тус-тăвансем ĕç пуçтарсан,
Хисеп туса туя пырсан, —
Телейлĕ çын çук пуль манран.

# ПАРНЕЛЕМ ЮРРĂМА

Кĕвви Г. МАКСИМОВĂН

1. Сар хĕвел пек чипер сăнупа,
Акăш евĕр кал-кал уттупа
Эс çырлан курăнан куçăма, —
Кил, савни, парнелем юррăма.

2. Чĕресем пĕр-пĕрне савнăран,
Юратушăн çунса тăнăран
Эс çырлан курăнан куçăма, —
Кил, савни, парнелем юррăма.

3. Пултараллă, ĕçчен пулнăран,
Ман çине тăванла пăхнăран
Эс çырлан курăнан куçăма, —
Кил, савни, парнелем юррăма.

# ХИТРИ ÇУК САН ПЕККИ

Кĕвви В. ПЕТРОВĂН

1. Эс иртетĕн çырма хĕррипе,
Манпала, Шупашкар хĕрĕпе.
Сисрĕн пулĕ чĕрем çуннине, | 2 хут
Илĕртӳллĕн пăхан ман çине. |

2. Илĕртӳллĕн пăхан ман çине,
Туйнăçем юрату вăйлине,
Çурхи кун... çăкасем çеçкере, | 2 хут
Сан сăну яланах чĕрере. |

3. Сан сăну яланах чĕрере.
Пытăр çак юрату ĕмĕре.
Сар хĕвел йăл! çиçет тӳпере, | 2 хут
Хитри çук сан пекки тĕнчере! |

# САРПИКЕ

Кĕвви А. АРХИПОВĂН

(Халăх юрри майлă)

1. Улма пахчинче,
Хĕвел ăшшинче
Саркайăк юрлать,
Сасси ян каять.

2. Вăрман хĕрринче,
Çăка айĕнче
Кĕтет сарпике
Чунĕ савнине.

3. Анаткас енчен,
Сăрнай катинчен
Тухрĕ ун каччи —
Кўршĕ ял ачи.

4. Çил çук ĕшнере,
Çăка çеçкере.
Эх, мĕнле хитре
Каччăпа хĕре!

# АТЬĂР ВĂЙЙА ТУХАР-И

Кĕвви Г. ЛЕБЕДЕВĂН

(Халăх юрри тăрăх)

1. Атьăр вăййа тухар-и те
Çĕнĕ сăвă калар-и. } 2 хут
Пирĕн çине чун савни те
Ăшшăн пăхса култăр-и. } 2 хут

2. Атьăр вăййа тухар-и те
Çӳл тӳпене пăхар-и } 2 хут
Çитмĕл çичĕ çăлтăр пек те
Савăнайса выляр-и. } 2 хут

3. Атьăр вăййа тухар-и те
Çĕнĕ юрă юрлар-и. } 2 хут
Йĕс шăнкрав пек сасăпа та
Çĕршыв ятне мухтар-и. } 2 хут

4. Атьăр вăййа тухар-и те
Вăй кĕввине калар-и, } 2 хут
Вăйă илемпе савăнса та
Ĕçре маттур пулар-и. } 2 хут

# ҪЕМЁЛ УЙӐХ ХӐПАРАТЬ

Кӗвви Т. ФАНДЕЕВӐН.

А. ОРЛОВ-ШУҪӐМ та юрра хывнӑ

1. Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать,
Йӑлтӑр-йӑлтӑр курӑнать.
Хӗре каччӑ ыталать,
Ыталать те чуптӑвать.

Ай-яй-яй! Ыталать,
Ыталать те чуптӑвать.

2. Ҫӗмӗл уйӑх хӑпарать,
Вӑрттӑн пӑхса йӑл кулать.
Хӗр каччӑран вӑтанать,
Ҫӗмӗрт айне пытанать.

Ай-яй-яй! Вӑтанать,
Ҫӗмӗрт айне пытанать.

3. Шуҫӑм ҫути палӑрать,
Шӑпчӑк юрӑ шӑрантать.
Ҫаччӑ хӗре ӑсатать,
Ҫӗр кӗскишӗн кулянать.

Ай-яй-яй! Ӑсатать,
Ҫӗр кӗскишӗн кулянать.

## ҪĔТЕРУК

Кĕвви А. ТОКАРЕВĂН

1. Чиперук, Чиперук,
Пирĕн маттур Ҫĕтерук
Епле пулма пĕлнĕ-ши,
Мĕнле каччă савмĕ-ши?

2. Ҫĕтерук, Ҫĕтерук,
Саврĕҫ ăна пĕр тăрук
Икĕ каччă: Михала,
Тата вĕҫкĕн Микула.

3. «Юрату, Юрату...
Эсĕ мана кăмăл ту...»
Ҫапла калать Михала,
«Эх, чунăм!» тет Микула:

4. Чиперук, Чиперук,
Йăрăс пӳллĕ Ҫĕтерук
Ҫыру илчĕ аякран,
Чунĕ савнă каччăран.

5. Ҫĕтерук, Ҫĕтерук,
Сар хĕр, ĕҫчен Ҫĕтерук
Хурав ҫырчĕ ҫав каҫах:
«Пырап», — терĕ, — кăҫалах.

## ҪАХАЛ ИВАН

(Шӳтлӗ юрӑ)

Кӗвви А. ТОКАРЕВӐН

1. Пирӗн Иван мухтанать,
Пуш нараппан ҫаптарать.
Тӗрӗссипе хӑй ӗҫре
Пырать кайра, хӳрере.

Тантӑшӗсем акара:
Вӑл пур — выртать сулхӑнра.
Ҫаҫ пулсан ҫеҫ чун кӗрет,
Хӗрсем патне вӗҫтерет.

2. Чипер хӗрсем умӗнче
Вӗҫме хатӗр пӗлӗте.
Ҫунат ҫукки ҫумӗнче
Ҫансӗрлет-ҫке йӗкӗте.

Эп ятларӑм Ивана,
Ан ҫаҫӑрттӑр сӑмсана.
Сӑмахпа мар, ӗҫпеле
Ҫунат тупма пӗлмелле.

## ТИП МУНЧА

Кёвви Г. МАКСИМОВĂН

1. Эрне иртрĕ пулмалла, —
Çан-çурăма çумалла..
Илтĕм милĕк, мунчала,
Тухса утрăм мунчана.

2. Ҫам хăйтăр-ха ятлама, —
Пăртак картне лартмалла:
Мунча хыççăн, çула май,
Пыр тĕпне те çумалла.

3. Ура утмасть... Қил-килех,
Унта çитсе ӳкмеллех!
Қурать арăм, ак, каллех
Мунча кĕртет типĕллех!

4. Тепĕр кунне эп — ĕçре, —
Пуçра — сĕрĕм-тĕтĕре.
Мана мухмăр пĕтерет,
Бригадирĕ тĕтĕрет.

5. Халтан кайрăм шутласа:
Ăçта хурас намăса!..
Илтĕм милĕк, мунчала,
Қаллех утрăм мунчана...

## ҪУН ВӖҪЛЕНЧӖ ПУЛМАЛЛА

Кӗвви А. РОМАНОВӐН

Ӳркенмест ҫав ман ура, —
Ирех ҫитрӗм кантура.
Пӗр пуҫлӑха курмалла,
Унпа пӗр ӗҫ тумалла.

Пуплет вахтер манпала:
— Ҫӗтме тивет пулмалла,
— Тӑванӑм, — тет, — эс тӑхта, —
Пуҫлӑх тухнӑ халь таҫта...

Хаклӑ вӑхӑт час иртет,
Ҫӑнтӑрла та ак ҫитет.
Уткалатӑп ҫурт тавра,
Хуралланӑн кантура.

Вахтер пуплет манпала,
Юри шӳтлет пулмалла:
— Аван-и, — тет, — вахтӑра?
Пуҫлӑх халӗ апатра...

Йӑпататӑп эп хама,
Ҫитет вӑй-хал тӑхтама.
Мӗн калас, тен, чӑтмалла,
Ӗҫе татса каймалла!

Анчах вахтер систерет, —
Ҫулараххӑн куҫ хӗсет:
— Паян кай, — тет, — каялла,
Ҫун вӗҫленчӗ пулмалла.

# ТУПМАЛЛИ


Ытарайми Чăваш çĕршывĕ . . . . . . . . 3
Çĕр-планета чĕнет . . . . . . . . 4
Мухтатпăр вырăс халăхне . . . . . . . . 5
Палăк . . . . . . . . 6
Ытарайми тăван чĕлхемĕр . . . . . . . . 7
Чăваш тĕрри . . . . . . . . 8
Чĕрери туйăм . . . . . . . . 9
Тăван хула . . . . . . . . 10
Тăвансемĕр, тав сире . . . . . . . . 11
Чĕре юрри . . . . . . . . 12
Пире тăван кĕтсе тăрать . . . . . . . . 13
Ăçтан пĕлнĕ эс пулма . . . . . . . . 14
Савăнăç юрри . . . . . . . . 15
Мĕнле пурăнан, аякри тус-тăван . . . . . . . . 16
Ялйышпа пĕрле чухне . . . . . . . . 17
Колхоз лаши, хура тур . . . . . . . . 18
Асли çук çăкăртан . . . . . . . . 19
Мухтав сире, çĕр ăстисем . . . . . . . . 20
Тăван ялăм . . . . . . . . 21
Сад янăрать саркайăк сассипе . . . . . . . . 22
Эпир — маттур хăмлаçăсем . . . . . . . . 23
Парне . . . . . . . . 24
Кĕреке юрри . . . . . . . . 25
Атте-анне . . . . . . . . 26
Каçар, анне . . . . . . . . 27
Слакпуç сыннисем . . . . . . . . 28
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет . . . . . . . . 29
Патăръел каччи-хĕрĕсем . . . . . . . . 30
Арапуç хĕрĕсем . . . . . . . . 31
Кашмаш каччи . . . . . . . . 32
Савни саламĕ . . . . . . . . 33
Таврăнатăп салтакран . . . . . . . . 34
Кала, тусăм, чăннине . . . . . . . . 35
Хуткупăса тытсассăн . . . . . . . . 36
Пурçăн тутăр . . . . . . . . 37
Мана хытă ан кала . . . . . . . . 38
Чунăм çуннăран . . . . . . . . 39
Çурла уйăх . . . . . . . . 40
Ăсатса яр мана . . . . . . . . 41
Эс мана юратсан . . . . . . . . 42
Халь кама юрруна парнелен . . . . . . . . 43
Телейлĕ туслăх . . . . . . . . 44
Тальянка . . . . . . . . 45

Савнă тусăма . . . . . . . . . . 46
Кĕтрĕм-кĕтрĕм саня . . . . . . . . . 47
Утса мар, вĕçсе çитесчĕ . . . . . . . . 48
Юрату юрри . . . . . . . . . . . 49
Кил, савни, лар çума . . . . . . . . 50
Çырма хĕрринче . . . . . . . . . . 51
Чупрăм-тухрăм кӳлĕ хĕррине . . . . . . 52
Савни мана чунтан савсан . . . . . . . 53
Парнелем юррăма . . . . . . . . . . 54
Хитри çук сан пекки . . . . . . . . . 55
Сарпике . . . . . . . . . . . . . 56
Атьăр вăййа тухар-и . . . . . . . . . 57
Кĕмĕл уйăх хăпаратъ . . . . . . . . . 58
Кĕтерук . . . . . . . . . . . . . 59
Кахал Иван . . . . . . . . . . . . 60
Тип мунча . . . . . . . . . . . . 61
Кун вĕçленчĕ пулмалла . . . . . . . . 62

0,80

Хакĕ 20 пус
Индекс 73987

Библиотека журнала «Ялав» № 8 (92)

В. И. ДАВЫДОВ-АНАТРИ

СОВРЕМЕННЫЕ ПЕСНИ

На чувашском языке

Редактор А. В. ЛУКИН
Худ. редактор В. П. СИДОРОВ

---

Издательство Чувашского обкома КПСС

---

НТ 34329. Сдано в набор 15.05.90 г. Подп. к печати 21.06.90 г. Усл. печ. л. 2,6. Формат 70x100 $^{1}/_{32}$. Объем 2 п. л. Уч.-изд. л. 3.02. Авт. л. 3,0. Заказ № 2334. Тираж 30000. Цена 20 коп.
Типография издательства Чувашского обкома КПСС.
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.